Ядрицова Алёна Андреевна
вĕрентекен
МБОУ "Йĕпреçри 2-мĕш СОШ"
пгт Йĕпреç, Чăваш Республики

ВĂЙĂ – ЧĂВАШ ЧĔЛХИПЕ ЧĂВАШ ЛИТЕРАТУРИ УРОКĔСЕНЧЕ «КУЛЬТУРĂСЕН ÇЫХĂНĂВНЕ» ПУРНĂÇЛАМАЛЛИ МЕСЛЕТ

Аннотаци: статья чăваш чĕлхипе литературине вĕрентес ĕçри нумай çул пухнă опыта пĕтĕмлетет, хальхи шкулта чĕлхе вĕреннĕ чухнехи тĕп йывăрлăхсене палăртать: мотиваци чакни, сехет çитменни, çемье сахал хутшăнни, чĕлхене пассивлă ăнланнипе хастар усă курни хушшинчи уйрăмлăх. Автор ăнланса илмелли тата татса памалли майсем шырамалли пĕлтерĕшлĕ çак меслетлĕх дилеммисемпе ыйтусене палăртать: сăмах практикине йĕркелесси, вĕренекенсен хутшăнăвне ӳстермелли мелсем тупасси тата вĕренĕвĕн çирĕп кăтартăвĕсене пурнăçласси. Сĕннĕ шухăшсем меслетлĕх пĕрлешĕвĕсенче сӳтсе явмалли тата шкулпа çемьере тăван чĕлхене пулăшмалли вырăнти практикăсене хатĕрлемелли никĕс пулма пултараççĕ.

Тĕп сăмахсем: чăваш чĕлхи, тăван чĕлхене вĕрентесси, чăваш литературине вĕрентесси, вĕренекенсене хавхалантарасси, чĕлхе хутлăхне сыхласа хăварасси, чĕлхе уйрăмлăхĕ, тăван чĕлхене вĕрентес ыйтусем, çемьепе тăван чĕлхе, чĕлхе компетенцине йĕркелесси, этнокультура вĕренĕвĕнчи педагогика практикисем.

Ядрицова Алёна Андреевна
учитель
МБОУ «Ибресинская СОШ №2»
пгт Ибреси, Чувашская Республика

ИГРА – СПОСОБ ОСУЩЕСТВЛЕНИЯ СВЯЗИ КУЛЬТУР НА УРОКАХ ЧУВАШСКОГО ЯЗЫКА И ЧУВАШСКОЙ ЛИТЕРАТУРЫ

Аннотация: *статья обобщает многолетний опыт преподавания чувашского языка и литературы и формулирует типичные трудности, характерные для современной языковой школы: снижение мотивации, дефицит часов, слабая*

Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

вовлечённость семьи, разрыв между пассивным пониманием и активным использованием языка. Автор фиксирует важные методические дилеммы и вопросы, требующие осмысления и поиска решений: формирование речевой практики, способы повышения вовлечённости учащихся и достижение устойчивых образовательных результатов. Предложенные размышления могут служить основой для обсуждения на методических объединениях и разработки локальных практик поддержки родного языка в школе и семье.

Ключевые слова: *чувашский язык, обучение родному языку, преподавание чувашской литературы, мотивация учащихся, сохранение языковой среды, языковая идентичность, проблемы преподавания родного языка, семья и родной язык, формирование языковой компетенции, педагогические практики в этнокультурном образовании.*

Манăн педагогика пурнăçĕ 30 çул тăршшĕ тăсăлакан кинолента монтажĕ пек. Унта тĕрлĕ кадрсем хăйĕн вырăнне тупнă: кăткăс та интереслĕ, кĕтмен самантсем те, тĕлĕнмелле те парадокслă кадрсем те, ăнăçлă та савăнăçлă самантсем те пур.

Паянхи кун тăван (чăваш) чĕлхепе литературине вĕрентнин *тĕп тĕллевĕ* – вĕренекенсене сăмах илемлĕхне, тăван наци литературин пуянлăхне туйма, ун патне ăнтăлма хăнăхтарасси, явăçтарасси. Çав хушăрах пирĕн ума тĕрлĕрен *проблемăсем* тухса тăраççĕ:

1) чăвашсем хушшинче хăйĕн тăван чĕлхине пĕлмен ачасем нумайланса пыни;

2) предмета вĕренес мотиваци чакни;

3) тăван чĕлхепе литературине вĕренмелли сехет çителĕксĕр пулни;

4) ашшĕ-амăшĕ енчен пулăшу çукки;

5) чăвашла ăнланакан ачасем те тăван чĕлхепе шухăшлама пĕлменни.

Проблемăна татса пани.

Çавăнпа та тăван (чăваш) чĕлхипе литературине вĕрентнĕ май вĕрентекен умне нумай ыйту сиксе тухать: вĕренекене тăван чĕлхепе мĕнлерех каласттарма

Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

вĕрентмелле-ши е хăнăхтармалла-ши? Урокри асра юлмалли процеса мĕнле майпа илĕртӳллĕ йĕркелесе паха результат илмелле-ши? Вĕренекеншĕн ситĕнӳ тата ăнăçу лару-тăрăвне мĕнлерех йĕркелеме пулать-ши?

Çак ыйтусене татса пама мана «*культурăсен çыхăнăвĕ*» *технологи* пулăшать.

«Культурăсен çыхăнăвĕ» текен технологи М. Бахтин идейине тĕпе хурса никĕсленнĕ. «Культурăсен çыхăнăвĕ» вăл – диалог (калаçу) евĕр. Диалог (калаçу) вăл – пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса ĕçлени, хутшăнакансем пĕр-пĕрне ăнланни, çав вăхăтрах хăйсен шухăшĕсене упраса хăварни. Диалога пулах чăнлăх та çуралать. Çавăнпа та диалог йĕркелеме пĕлекенсем яланах тĕрĕслĕхе çывăх. Чăваш чĕлхипе чăваш литератури урокĕсенче çак технологи вырăс тата ытти халăхсен культурипе танлаштарса тăван культурăна ăнланса илме, коммуникативлă пĕлĕве тивĕçлĕ аталантарма пулăшать.

«Культурăсен çыхăнăвĕ» – тăван чĕлхепе литературине ытти халăх чĕлхепе литературине танлаштарса вĕрентмелли лайăх мел. «Культурăсен çыхăнăвĕ» – тĕрлĕ информацие ас тума, халăхсене пĕр-пĕрне лайăхрах пĕлме, ăнланма пулăшать.

«Культурăсен çыхăнăвĕ» технологи çинчен тĕрлĕ философсем, психологсем, педагогсем çырса кăтартнă (М.М. Бахтин, В. С. Библер, С. Ю. Курганов). Анчах та «Современные образовательные технологии» кĕнеке авторĕ Г.К. Селевко ăна дидактика тĕлĕшĕнчен çĕнетмелле тесе палăртать.

Вăйă – тăван (*чăваш*) *чĕлхипе тăван* (*чăваш*) *литература урокĕсенче* «*культурăсен çыхăнăвне*» *пурнăçламалли меслет*. Тăван (чăваш) чĕлхипе тăван (чăваш) литература урокĕсенче пирĕн тĕп тĕллев ачасене шкулта чухнех ирĕккĕн хутшăнма хăнăхтарса пырасси, шкулта кăна мар, урамра та тăван чĕлхепе калаçма хăнăхтарасси. Çавăнпа та нумай чухне урокра та «вĕрентекен-вĕренекен» текен калаçу рамкинчен пĕчĕккĕн тухса «вĕренекен-вĕренекен» хутшăнăва çывăхлатса *коммуникативлă* пĕлĕве аталантармалла. Кун пек чухне коммуникацине аталантармалли чи лайăх мел – *вăйă* пулса тăрать.

Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Паллă психолог Д.Б. Эльконин ачасене кирлĕлĕхне шута илсе, вăййăн тăватă функцине палăртать: сăлтавласа ачан пултарулăх туртăмне аталантармалли меслет; пĕлӳ меслечĕ; ăс-хакăла аталантармалли меслет; ачана хăйне хăй ирĕккĕн аталанма вĕрентекен меслет. Асăннă меслетсемпе килĕшӳллĕн эпĕ вăййа виçĕ ушкăна уйăратăп: коммуникативлă, ăс-хакăл, сенсор вăййисем. Вĕсем чăваш чĕлхипе литература урокĕсенче «культурăсен çыхăнăвĕ» технологие аталантарса предмет, предметсен пĕрлĕхлĕ тата харкамлăх результачĕсене ăнăçлăн пурнăçлама пулăшаççĕ.

Коммуникативлă вăййăсем ачасене ирĕклĕн тытма, пуплеве аталантарма пулăшаççĕ. Тăван (чăваш) чĕлхипе тăван (чăваш) литература урокĕсенче коммуникативлă вăййăсемпе усă курни методика тĕлĕшĕнчен хăйне майлă илемлĕх кӳрет. Çак вăййăсен тĕллевĕ коммуникативлă шухăш-ĕмĕте (ĕнентерес, пĕлес т. ыт. те) пурнăçласси çеç мар, чĕлхе материалĕпе тĕрлĕ лару-тăрура усă курма хăнăхтарасси те пулса тăрать. Кун пек чухне шкул ачисемшĕн ку е вăл вăййа пурнăçлама йывăрри вĕсен пуплевĕнче сăмах йышĕ чухăн пулнине шута илмелле. Çавăнпа та дидактика материалне тĕплĕн суйласа хатĕрлемелле, коммуникативлă вăййа хутшăнакан ача валли сăмах моделĕсен тытăмне хатĕрлемелле (Тĕслĕхрен, *«интервью», «мăшăрна туп», «хăвăн рольна выля – ролевые игры», «хăш персонаж каланине пĕл – угадайте, кто это говорит?», «… – пожелания», «… – комплименты», «предложенисене вĕçле – закончи предложения», «Сăмах сăнчăрĕ – цепочка слов», «лото»* т. ыт. те).

Интеллектуаллă вăййăсем (*ăс-тăн вăййисем*) – ăс-тăна аталантармалли меслет шутланаççĕ. Чăваш чĕлхипе литература урокĕсенче грамматикăпа лексикăна çеç вĕренни çителĕксĕр. Вĕренекене пирĕн тăван чĕлхе хăш чĕлхесемпе хурăнташлă пулнине, унăн хăйне евĕрлĕхне ăнланма пулăшмалла. Пĕлĕве нихăçан та «чăмласа» памалла мар, яланах тĕрев элеменчĕсемпе памалла, сăлтавпа следстви çыхăнăвĕсене йĕркелеме пулăшмалла, ăмăртăва хутшăннă май ача хăех пĕлӳ тупма, ăс-тăна аталантарма тăрăштăр. Интеллектуаллă вăйăра ачасен лексика пĕр шайра мар пулсан та çăмăллăнах хутшăнма пулăшаççĕ. Кашни вăйă ачасене хăйне евĕр хăй тĕнчине е пĕр-пĕр ĕçе путма пулăшать, тăван

Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

чĕлхене пĕлни ĕçсене çăмăллăнах пурнăçлама пултарнине курма май парать, тăван культурăна пĕлме пулăшать. Çапла вара тăван чĕлхепе литературине вĕренмелли предметсен пĕрлĕхлĕ результачĕ те пурнăçланать. (Тĕслĕхрен, *«Хамăр вăйă – своя игра», «Мĕн? Ăçта? Хăçан? – Что? Где? Когда?», «Чи маттурисем – Умники и умницы», «Викторина», «Конкурссем», «Çавра сĕтелсем»* т. ыт. те).

Сенсор вăййисем – туйăма аталантармалли меслет шутланаççĕ. Уроксенче сенсор вăййисемпе усă курни чĕлхе единицисене асра тытма та, пĕтĕмĕшле тăван чĕлхен коммуникативлă компетенцие аталантарма та пысăк пулăшу парать. Сенсор вăййисенче шухăша, тимлĕхе, ăс-хакăла аталантарма пӳрне вăййисемпе усă курни уйрăмах пысăк вырăн йышăнать. Пӳрне хусканăвĕсем ачасемшăн савăнăçлă вăйă та, чĕлхе материалне çирĕплетме пулăшакан мел те шутланать. (Тĕслĕхрен, *«Тытса пăхнă япалана пĕл – угодай предмет», «Пĕр пекрех япаласене кала – поиск похожих предметов»: 1) çавра – сĕтел, мечĕк, хĕвел…; 2) панулми, груша, апельсин…* т. ыт. те).

Рефлекси. Çӳлерех пăхса тухнă кирек хăш вăйă та харкамлăх результачĕсене пурнăçлама анлă майсем парать. Вăйăсенче яланах рефлекси тапхăрĕ пысăк вырăн йышăнать. Çак тапхăрта ача хăйĕн умне лартнă «Вăйăа хутшăнса вăл мĕне вĕренчĕ?», «Вăйăа хутшăнса вăл мĕн турĕ»? «Çакăн пек результат патне мĕнле çитрĕ»? «Вăйăра илнĕ опытпа обществăн чăн лару-тăрăвĕнче усă курма пултарĕ-ши? вăл» текен ыйтусем çине хурав тупать.

Результативлăх. Виçĕ тĕрлĕ вăйă: коммуникативлă, ăс-хакăл тата сенсор – «*культурăсен çыхăнăвĕ*» технологие пурнăçламалли тухăçлă меслет. Вĕсем пулăшнипе ачана культурăсен çыхăнăвне ăнлантарса пама пулать. Çапла майпа эпир вĕренӳ ĕçĕнче предмет результатне пурнăçлатпăр. Вăйă мелĕ пулăшнипе эпир ачана хамăр тăван халăхăн культурине ăнланма кирлине кăтартма пултаратпăр. Эпир çавăн пекех ачана кирек епле пысăк культурăллă çын та хăйĕн тăван чĕлхине чи пысăк шая лартнине ăнланса илме пулăшатпăр: чи малтан эсĕ чăваш çĕрĕн ачи, эсĕ хăвна мĕнлерех тытнинчен ăна пурнăçра хисеплесси те ки-

Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

лет. Çапла эпир предметсен пĕрлĕхлĕ результачĕпе харкамлăх результачĕсене пурнăçлатпăр.

Эпĕ хам вĕренекенсен çитĕнĕвĕшĕн питĕ савăнатăп. Манăн вĕренекенсем муниципалитет, регион, Раççей тата тĕнче шайĕнче тĕрлĕ конкурссемпе конференцисенче, чăваш чĕлхипе литература олимпиадисенче пысăк çитĕнӳсем тăваççĕ. Çавăн пекех кашни вĕренӳ çулĕнчех РИА хатĕрлемелли диагностика ĕçĕсен пĕтĕмлетĕвĕсем тăрăх лайăх динамика палăрать (4–4,5 балл).

Эпĕ ачана хамăрăн тăван культурăна лайăхрах пĕлме тата туйма пулăшасса шанатăп. Манăн уроксен девизĕ – «Кĕрешмелле, шырамалла, тупмалла, анчах та парăнмалла мар – Бороться и искать, найти и не сдаваться».

Список литературы

1. Амонашвили, Ш. А. Размышления о гуманной педагогике / Ш. А. Амонашвили. – Москва : Издательский дом Шалвы Амонашвили, 1996. – 496 с.

2. Волков, Г. Н. Этнопедагогика : учебник для вузов. – 2-е изд., испр. и доп / Г. Н. Волков. – Москва : Академия, 2000. – 176 с.

3. Выготский, Л. С. Игра и её роль в психическом развитии ребёнка / Л. С. Выготский // Вопросы психологии. – 1966. – № 6. – С. 62–76.

4. Методические рекомендации по преподаванию родных языков в общеобразовательных организациях Чувашской Республики. – Чебоксары : ЧРИО, 2023. – 84 с.

5. Хухлаева, О. В. Теория и практика межкультурной коммуникации: учебное пособие / О. В. Хухлаева, О. Е. Хухлаев. – Москва : Юрайт, 2021. – 234 с.

6. Чувашский фольклор : сборник пословиц, загадок и сказок / сост. Н. П. Петров. – Чебоксары : Чуваш. кн. изд-во, 2018. – 256 с.

7. Эльконин, Д. Б. Психология игры. – 2-е изд. / Д. Б. Эльконин. – Москва : Владос, 1999. – 360 с.

Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)